С(Чув)
В 55
35123-чув

И. Вишневская

# Тасалăх пур çĕн ĕмĕрсен...



Национальная библ отека ЧР
4-035123

Шупашкар районĕнчи «Тăванъен» хаçатăн Н.Шупуççынни ячĕпе хисепленекен литература пĕрлешĕвĕ

## Клавдия Вишневская

# Тасалăх пур çĕн ĕмĕрсен...

Çĕртме уйăхĕ, 1994 çул.
Кÿкеç.

К 81.09(=чув)6-52+4411
84(2Рос=Чув)6-52+441



Çĕнĕ пурнăç çути çуталать,
Çĕнĕ куншăн кивви манăçать.
Этемлĕхре çĕнни калаçать,
Çĕнĕ пурнăç туса хăварать.
Эй, Çĕнни! Çынсем кĕтни!
Мĕнле килсе эс çитрĕнех!
Тинех! Тинех!
Пурăнма пуçлатпăр-ши?!

35123-чув.
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

Вишневская Клавдия Ивановна Çĕрпӳ районĕнчи Шăнарта 1955 çулта çуралса ӳснĕ. Вăл вăтам шкулта вĕреннĕ чухне техникăпа интересленнĕ. Çав енĕпе пĕлӳ Шупашкарти энергетика техникумĕнче илнĕ.

Чунра сăвă çырăнма пуçласан Чăваш Патшалăх университетĕнче историпе филологи факультетĕнчен ăнăçлă вĕренсе тухать.

Клавдия Вишневскаян малтанхи сăввисем 1985 çулта (çав çулта сырма пуçланă) «Ленинец» хаçатра тата «Тăван Атăл» журналта кун çути курнă. Унăн пĕрремĕш калавĕ — «Шăпа», сăввисем сборниксенче тухнă. Авторăн пĕрремĕш кĕнеки — «Асанне юрри». Ăна Чăваш Патшалăх кĕнеке издательствинче кăларнă.

Çыравçăн хайлавĕсенче çепĕçлĕх, ăшă кăмăллăх, тӳрĕ чун тасалăхĕ ытларах сисĕнет. Унăн сăввисемпе композиторсем юрăсем хываççĕ.

К. И. Вишневская малтан «Электроприбор» заводра ĕçленĕ, халĕ — «Тăванъен» хаçатăн общаствăпа пурнăç пайĕн корреспонденчĕ.



ПРОВЕРЕНО
2010 11 ОКТ 2017

## МИРШЕН

Ҫĕнĕ пурнăҫ — савăк юрă,
Тулăх вырăн пирĕн ҫĕр.
Уншăнах хыватăп юрă,
Пулăп чи тивлетлĕ кĕр.

Ҫул иртӳҫĕн пур кĕвве те
Илтĕп эпĕ вăйлăнрах.
Ҫулăм кĕрĕ ман хĕве те,
Туйĕ чун ытарлăрах.

Манăн шанчăк—чĕртнĕ ҫулăм,
Сӳнмĕн эсĕ нихăҫан.
Чечеклентĕр пурнăҫ ҫулĕ,
Пултăр мир кăна ялан.

* * *

Йăл-куллилле чун-ачашăн
Эпĕ пурăнатăп.
Сăртăнса ăна ачашшăн
Ҫепĕҫ ыталатăп.

Вăл паян кулать ыраншăн,
Ырă саманашăн.
Эпĕ йывăрпа тăртаннă—
Ырлăхĕ — ачашăн.

## ЁМЁТ

Тёттём каç. Çӳллё пёлёт.
Çăлтăр вăй вылять унта.
Лăпкă çĕр, ырă тĕлĕк—
Ёмĕт — сан пурнăçунта.

Пултăр çак аслă ёмĕт
Яланах эс вĕçĕмсĕр, ёмĕр
Вутами пек чунра!.

x x x

Пĕр кун ирттернĕ пурнăça
Танлаштармастăп
Тепĕр кунпала.
Тухса утатăп тухăçа е анăçа—
Улталанмастăп—
Ман пурăнмаллах.

Пĕр ачасемшĕн
Савнă çынпала.
Анчах ютти ура хурать—
Кирлĕ эпĕ пурнăçра—
Çанталăк темшĕн килĕшнĕ çапла.

Хĕвел çутипелен утам.
Тăри юррисĕр
Шăпчăк, ан юрла.
Сывалнă кун юхать пуль тар:
Усал, ыррисĕр ан пӳл ман çула!..

* * *

Тĕнче варри вутра чухне
Ăçтан-ха чăтăн кулянмасăр?
Шута илсе ун кун—çулне.
Кама хăварăн шутламасăр?

Пĕри килет, тепри каять...
Тĕнче ылмашăвĕ—мĕн калăн.
Усал юласшăн мар кая—
Ырри ав çухалать, мăнтарăн.

Усал-тĕсел йăлт кĕлленсен,
Çут кун хавасллăхне курасчĕ.
Тасалăх пур çĕн ĕмĕрсен,
Ыр кăмăлпа унта утасчĕ.

• • •

Хăйăр хайранса юлать пулин те
Чул пулмасть.
Темĕнле куçпа пăхсан та,
Чунăм ăшăнмасть:
Йăлтăр пĕрчĕ чăтаймасть
Аялалла шумасăр.
Чĕрем чăтса тăраймасть
Тĕрĕслĕхе тупмасăр...
Пĕтĕм хăйăр таврара,
Çил вĕçтерет кунталла.
Шанчăк-шанчăк — халăхра—
Уçă куçпа пăхмалла.
Куçа кашни уçмасан,
Хăйăр пекех шăвăпăр—
Хирĕç пырса çапăнса,
Кĕрхи кунра шăнăпăр...

х х х

Каçхи урам.
Çутă çук.
Çăлтăрсем
Шарламаççĕ.
Эп шутлатăп
Утнăçем:
Ку—чун каçĕ.

## АЛМАЗ АЛĂРАХ

Çĕрлехи кантăкра
Чĕмсĕр тĕттĕм вăй вылять.
Ача пек вăл, кулăшла,
Сĕм-çĕрлехи шухăшра.

Ун çине пĕр пăхсан—
Чунлă, çын пек курăнать.
Кĕртрĕ пек кăштах тăна,
Пулăшайĕ-ши ăса?

Ыранхи кунăмран
Шикленетĕп.— калаçмас.
Вăл сисет, чĕртет алмаз:
Çич ютран ан хăра!

Çĕрлехи кантăкра
Чĕмсĕр тĕттĕм вăй парать.
Чĕрери лăпкăлăхра
Çĕнĕ сăвă çыртарать.

x x x

Атте калать:
—Хĕрĕм,—тет,—
Вĕлтĕр-вĕлтĕр ан çӳре,
Вĕçкĕн çеç ун пек çӳрет.
Васкакан вакка сикет,
Ерипен — çынна çитет.

Анне калать:
—Хĕрĕм, — тет,—
Ылтăн-кĕмĕл туянса,
Ан çӳре-ха мухтанса.
Унсăрах эс савăнсам,
Ылтăн-кĕмĕл хăв пулсам.

* * *

## АННЕСЕМ

Тăрипе пĕрле тăраççĕ,
Сывлăмпа питне çăваççĕ,
Ĕнине сума васкаççĕ—
пирĕн аннесем.

Ĕçлесе чапа тухаççĕ,
Ырă тĕслĕх кăтартаççĕ,
Чăн та пит савăнтараççĕ—
пирĕн аннесем.

Савăк юрă кĕвĕлеççĕ,
Иксĕлми телей пиллеççĕ,
Пурнăçа илем кӳреççĕ—
пирĕн аннесем.

## ЧĂВАШ ПИКИНЕ

Ялсене юлакан хĕрсене
Куç хывмасăр пăхса иртес мар.
Çитсе кӳрăр кăçал кĕркунне
Хăнана—хăтана, инçе мар.

Ялсене юлакан хĕрсене
Тырпула пуçтарсан килĕшес.
Хĕтана пыракан яшсене
Чысласа çĕн сăра ĕçтерес.

Сарă пыл тутине илнĕ пек
Каччă туйтăр курсан пикене.
Пике пулĕ унпа сар чечек
Чăнласах юратсан пĕр-пĕрне.

x x x

Чун ăшши
Мунча ăшши мар:
Чул çине шыв сапнă пек
Чĕре çине сапаймăн.
Чунра ăшă пулмасан
Çынна ырă тăваймăн.

Савнисем,
Қайăк пек,
Чĕвĕлтетеҫҫĕ.
Чунпа чун
Ырлăхра
Киленеҫҫĕ.
Хăшĕ камшăн?
Кам пĕлет.
Вĕсем тĕл пулнă—
Ҫав ҫитет.

* * *

«Кайри мала» кăшкăрни
Хуркайăкне вăй памĕ.
Кая юлса ырлани
Чун хавалне пыраймĕ.

* * *

Пĕччен шĕшкĕ, шарт! туса хуҫăлать.
Ҫын чĕри те хăш чух ҫавăн пек аманать.
Хĕм сапса, юн тăкса суракан чĕрере
Ҫав турат чĕрĕлсе сыпăнать ҫĕнĕрен.

* * *

Варлă терĕҫ те
Варларĕҫ.
Тусăм ҫавăнпа
Савмарĕ.
Саваканне шыратăр,
Ҫын сăмахĕпе йăпантăр.

* * *

Ытла ырă пулнăран
Ҫăлăнăҫ тупаймăп.
Айăпĕ пурах—чунра—
Урăха саваймăп

## САВМАСАН

Çутă уйăх хăпарать
Çутатса хăй тĕнчине.
Савăнмашкăн йыхăрать
Урама пикесене.

Капăр каччă çуталать,
Юрату юрри илтсен.
Хĕмпелен вăл çункалать
Юрату явапĕччен.

Çутă уйăх çуталсан,
Çитĕ вăхăт уйрăлма:
Чунупа эс савмасан
Ан тапта çĕн Сывлăма.

x x x

Каччă сăвă çырнине
Юрататăп вулама.
Унăн тертлĕ чĕрине
Куç хыватăп пулмалла.

* * *

Тулса чăмăртаннă
Тулă пĕрчи.
Хĕвел хĕртсе илчĕ—
Ĕнчĕ чĕрçи.
Пике—тулса çитнĕ
Тулă пĕрчи.
Юрату пĕçертрĕ—
Хăмăр кăкăр тăрри.

## ÇУМĂР ТАШШИ

Шăпăр-шăпăр тăкăнчĕ,
Шăнкăр-шăнкăр илтĕнчĕ.
Йăлтăр-йăлтăр курăнчĕ,
Чăлтăр-чăлтăр сирпĕнчĕ.

## ÇУРКУННЕ

Çуркунне çитнипе
Шурă юр ирĕлет.
Сар хĕвел хĕртнипе
Сивĕ кун сирĕлет.
Çутçанталăк ăшши
Çын чунне ăшăтать.
Ун илемлĕх тĕшши
Юрату çуратать.

## ИРĔКЛĔН ЮРЛАТĂР ЮРАТУ

Çăлтăрсем çуталчĕç каçхине,
Çутипе киленĕç урамсем.
Çепĕç туйăм витрĕ чĕрене
Сукмакпа савниçĕм утнăçем.

Çăлтăрсем выляççĕ тӳпере,
Вăтанса пăхаççĕ çĕр çине.
Ай, мĕнле-ха ырă чĕрере,
Туйрăм çăлтăрсем те савнине.

Ăнтăлать ман чун тӳпенелле,
Ăмсанать çут çăлтăр шăпине.
Тен, пĕр сукмакпа çӳремелле,
Кăмăлтан савсассăн пĕр-пĕрне.

Çăлтăр, çутатма эс кăмăл ту,
Савăш сукмакне çак çĕр çинче.
Ирĕклĕн юрлатăр юрату
Чĕрĕлсе кашни çын чĕринче.

x x x

Улталас теместĕп,
Урăх кĕвĕçместĕп.
Юнашар вĕçместĕп—
Юратас теместĕп.

Таçта-таçта, инçетрен,
Шур юр çунă вăхăтра
Ма юрлатăн чĕремре,
Вут хуратăн ăшăмра?

Юр та чарăнать çума,
Çуталать хĕвел çинче.
Çĕнĕ юрă шăпланмасть,
Ах, çунать ман чун пĕччен.

Çутă юр пулам вĕçме
Савнă тусăмçăм патне.
Юра ăмсантăм? Шеллемес,
Пĕлсен те вăл ирĕлнине.

Уссăрах чĕнен ялан
Çутçанталăк юрăхне.
Чăвашăн çук ун пек йăла:
Савас килмест çын мăшăрне..

* * *

Хăмла çырли тути ман тутара
Савни савса чуптунă вăхăтра.
Шур хурăн вăрттăн пăхрĕ куç хывса,
Саркайăкăм юрлать халь ăмсанса.

Татас килетчĕ ман хăмла çырли,
Шиклентĕм йĕппинчен-çке, чун-варли.
Çўрерĕм темĕн вăхăт шутласа,
Хĕвел те уйăх хыççăн çавrănса...

Ах, саркайăк, хыт ăмсантăн-ши?
Шап-шурă хурăн, куçăхтартăн-ши?
Çырла тутийĕ пĕтрĕ тутара,
Кĕр кунĕ, имĕш, палăрчĕ чунра.

## УЙРĂЛУ

Хĕвел анать чĕмсĕррĕн,
Эп утатăп тĕлсĕррĕн...
Мĕншĕн, мĕншĕн каç пулать?
Мĕншĕн, мĕншĕн чун сўрать!

Çутă шупка уйăхăм,
Манăн—йывăр хуйăхăм...
Ах, савниçĕм тек килмест,
Чунăм çакна ĕненмест.

Тĕрлĕ чечек татăттăм,
Хĕрлине çеç парăттăм...
Хĕл сивви хаяр пулсан,
Уйрăлу татах усал.

Хĕвел анать чĕмсĕррĕн,
Эп утатăп тĕлсĕррĕн...
Мĕншĕн, мĕншĕн каç пулать?
Çухату чуна сурать.

* * *

Шаннă кайăк йăвара пулман—
Чунăм ăшшине эп тупаймарăм:
Манăн сивĕ алăра улма,
Уйăратăп çурмаран—пур парăм.

Шăннă сивĕ улмана çурса,
Чĕртнĕ-чĕрĕлмен вутта пайларăм.
Эсĕ маншăн—ĕлĕкхи мăрса,
Эпĕ саншăн пулас çук шур арăм.

Шаннă кайăк йăвара пулман,
Çичĕ ют ăçтан-ха пултăр шанчăк?
(Шанчăкли паян вăл—мĕскĕн анчăк).
Чун шўтларĕ уйрăлма санран,
Юратсан та, пулас марччĕ анчăк.

## АШĂТАЙМĂН ЭС МАНА

Манпа кăна эс калаçасшăн,
Тытатăн
телефон кĕпçине:
Килсен, паян пĕрле пуласшăн,
Тухатăн
Чаплă Атăл хĕррине.

Асам чечекĕ илсе хутăн,
—Парнелĕп,—
терĕн чечекпе куна.
Нумай кĕтсе пайтах эс утрăн,
—Ĕненмĕп,—
калăн эсĕ халь мана.

Ку пулнă эп юратманран, тен,
Шутлатăп,
Текех кĕттермĕп-çке сана:
Чечек çыххи парнелесен те,
Чухлатăп,
Ăшатаймăн эс мана.

x x x

Чун сисмесĕрех
Калаçупа ăшăнчĕ
Вăл эсир кайсанах,
Йывăрлăхпа тăвăнчĕ.
Килсемĕрех,
Иртсемĕрех,
Çитсемĕрех
Чĕрем патне ялан-
Сисмесĕрех
Эп тайăп пуçăма,
Сисмесĕрех
Эп парăп аллăма..

Икĕ хурăн — юнашар,
Иккĕн эпĕр — уйрăмшар.
Кăвак куçăм, ан кĕттер,
Шурă тутăр вĕлкĕштер...

Икĕ хурăн — юнашар,
Эпĕр мĕншĕн пĕрле мар?
Ах, савниçĕм, кăвак куç,
Манăн кăмăла ан хуç.

Уйăх, Çăлтăр та пĕрле,
Чуптăваççĕ сĕм-çĕрле.
Шухăшларăм çĕрĕпе,
Çунтăм саншăн чĕремпе.

## АСАИЛУ

Кĕмĕл пек çиçен юр пĕрчисем
Ӳкрĕç пит çине ачашланса.
Савнă çын саламĕ пек вĕсем
Ячĕç чĕрене пăлхантарса.

Куç умне ак тухрĕç ерипен
Йышлă çăлтăр, кăмăллă каççем.
Улăхра çут сывлăм ӳкиччен
Савнипе пĕрле çӳренисем.

Кĕмĕл пек çиçен юр пĕрчисем
Ӳкрĕç сăнăма кĕмĕллетсе.
Савнă тусăн куçĕ пек вĕсем,
Асилӳ вăратрĕç илĕртсе.

## КĂМĂЛ

Кăмăл хăш чух хуçăлать.
Хуçăлтăрах,
Хăрама кирлĕ мар:
Турат мар—
Сыпăнать...

## ПĔРЕХ

Çавранать çил,
Çавранать.
Çаврантарах,
Пĕрех çӳп-çапа вĕçтернĕ пек
мана çĕклеймĕ.

Каласать сын,
Каласать.
Каластарах,
Пĕрех самаха вакланă пек
мана хуçаймĕ.

## ПĔР-ПĔРИНШĔН

Савнă тусăм, мĕншĕн инçетре
Пурăнатăн эс?
Тĕттĕм куçлă çăлтăр пек тĕтрен
Курăнатăн эс.
Ирте вăхăт ирĕксĕр, савăнмасăрах,
Чĕресем ав тунсăхлĕç пĕр-пĕриншĕн.

Кас ваййишĕн анчĕç çăлтăрсем.
Курăнмасть сана.
Вĕçĕм-вĕçĕм куç сăнанăçем
Чунăм пусăрнать.
Ирте вăхăт ирĕксĕр, савăнмасăрах,
Чĕресем ав тунсăхлĕç пĕр-пĕриншĕн.

Вăхăт иртĕ, иртĕ тĕлпулу,
Ма туймастăн, эс?
Чĕресемшĕн пултăр уйрăлу
Тетĕн-ши, пĕлмес.
Иртĕ вăхăт ирĕксĕр, савăнмасăрах,
Чĕресем ав тунсăхлĕç пĕр-пĕриншĕн.

75 коп.

10

Новая цена

8 00 к.